Газета «Çĕнтерӳ çулĕ» t.me/putpobedy21 Путь победыОК Путь Победы

Аçăмçырми территори пайĕ

# ПАЯНХИ ЯЛ

#регпроекты #нацпроекты

**Аçăмçырми территори пайне 11 ял кĕрет – Аçăмçырми, Тăвальушкăнь Ялтăра, Юпшик Ялтăра, Уйкас Ялтăра, Малтикас Ялтăра, Кăмпал, Авăрçырми, Мăн Хирлеп, Йăлтăм, Пайăк, Чăрăшкас Хирлеп**

*Проект Вăрнар муниципаллă округĕ пулăшнипе пурнăçа кĕрет*

## Пĕрле тăрăшни – кашнин ырлăхĕшĕн

**Аçăмçырми территори пайĕ, йышăнакан лаптăкне кура, округра чи пысăккисен шутĕнче. Урăх ун пекки çук: ку тăрăх вунпĕр яла хăйĕн тытăмне пĕрлештерет. Вĕсенчен кашниех тавралăхĕ-вырăнĕпе хăйнеевĕрлĕ, уйрăм историпе, пурнăç йăли-йĕркипе... Кашнинчех куллен тимлĕх ыйтакан, çынсене хумхантаракан çивĕч ыйтусем сахал мар. Çавăнпа та территори пайĕн ертӳлĕхне ĕçлеме ансат тееймĕн: вунпĕр ялти лару-тăрăва пĕрмаях асăрхавра тытма тивет. Тавралли территорисене хăтлăлатассине те, социаллă учрежденисен пахалăхлă ĕçне тивĕçтерессине те, хӳтлĕхсĕр ушкăнри çынсене пулăшу кӳрессине тата ытти нумай-нумай ыйтăва. Ялсенчи юсав-çĕнетӳ ĕçĕсене халĕ хăтлăхпа территорисен аталанăвĕн управленийĕ урлă йĕркеленĕ май, ял çыннисен ыйтăвĕ-сĕнĕвĕсене округ ертӳлĕхĕ патне çийĕнчех çитересси те уйрăм тимлĕхре.**



А.Карезин.



Аçăмçырминчи çĕнĕ палăк.

Тĕп вырăнта, паллах, кунта пурăнакан çынсем: вĕсен пурнăç ăнăçлăхĕ, ĕçлеме те, пушă вăхăта интереслĕ ирттерме те лайăх майсем пулни, ача-пăчан пахалăхлă вĕренĕвĕ-аталанăвĕ, ватăсен ырлăхĕ-канлăхĕ. Çулталăк пуçламăшĕнчи кăтартусемпе, акă, кунти вунпĕр ялпа халăх хисепĕ пĕтĕмĕшле 1474 çынпа танлашнă. Кăмăла çĕклекен пулăм çинчен те асăнса хăварас килет. ЗАГС пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх, юлашки виçĕ çулта ача çураласлăхĕ, пĕрер тĕслĕх кăна пулин те, ӳссе пыни курăнать (2020 çулта – 11, 2021-мĕшĕнче – 12, пĕлтĕр – 13 пепке). Çынсен вилеслĕхĕн кăтартăвĕ вара пĕлтĕр 2020 çулхипе танлаштарсан 2 хут чакнă (38 тата 18 çын пурнăçран уйрăлнă). Чăн та, шанăç паракан кăтарту.

Халăх йышĕнчен ытларах пайĕ ĕçлев ӳсĕмĕнчисем – 883 çын. Вĕсенчен çурри майлă тăван тăрăхрах ĕçлесе-тĕпленсе пурăнаççĕ. Тепĕр ушкăнĕ (14 процент енне) укçа-тенкĕллĕ пулас тесе республика тулашне çӳресе вăй хурать. Ял çынни, йăлана кĕнĕ пек, выльăх-чĕрлĕх усраса, ял хуçалăх продукцийĕнчен тупăш илме тăрăшать. Хушма хуçалăха аталантарассипе тимлесех ĕçлекенсем сахал мар Аçăмçырми тăрăхĕнче – 220 ытла. Уйрăммăн илсен, çулталăк пуçламăшĕ тĕлне ĕнесене 166 хуçалăхра тытнă – пĕтĕмпе 282 пуç.

Нумайăшĕ аякка тухса каймасăр вырăнтах лайăх шалуллă ĕç тупма пултарни кунта ӳсĕмлĕ аталанакан ял хуçалăх предприятийĕн тӳпи те. Шăпах ку территори пайĕнче «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ» акционерсен обществин выльăх-чĕрлĕх комплексĕ ĕç-хĕлне хăватлăн пурнăçласа пырать.

Каласа хăвармалла, Аçăмçырми тăрăхĕнче çаврăнăша кĕртмен, ытахаль выртакан ял хуçалăх çĕрĕсем çук. Ытларахăшĕпе ĕнтĕ аш-какай комбиначĕ усă курать: тĕрлĕрен ял хуçалăх культурисене акса ӳстерет, выльăх апачĕлĕх куръăксене те чылай лаптăкра çитĕнтерет. Хăшпĕр участоксем вара фермер хуçалăхĕсенче, уйрăм çынсенче. Вĕсем те вырăнти ял хуçалăх аталанăвне пĕчĕк мар тӳпе хываççĕ.

**– Ял пурнăçĕнчен аякра тăман, активлă позици йышăнакан çынсем çулсерен ытларах та ытларах. Çакă савăнтармасăр пултараймасть. Харпăр хăй пурăнакан вырăна хăтлăрах тăвас, тавралăх илĕртӳлĕхне ӳстерес тесе сĕнӳ-канашсемпе, ырă пуçарусемпе тухни питĕ аван. Вĕсене сӳтсе яватпăр, пурнăçа кĕртме тăрăшатпăр. Çав шутра – федераллă тата республикăра йышăннă пулăшу программисене хутшăнса та,** – çирĕплетет Александр Владимирович.

Акă, Аçăмçырми тăрăхĕнче кашни ял республикăран тивĕçнĕ 100 пин тенке усăллă, халăхшăн пĕлтерĕшлĕ ĕçсене янă. Астăватпăр, ку парнене Чăваш автономине йĕркеленĕренпе 2020 çулта 100 çул çитнĕ тĕле тунăччĕ. Пулăшупа усă курса Чăрăшкас Хирлепре стела лартнă, тăватшар ялта ача-пăча тата спорт площадкисем уçнă, Юпшик Ялтăрара кану вырăнне йĕркеленĕ, Малтикас Ялтăрара Астăвăм палăкĕ умне хăтлăлатнă.

Юлашки çулсенче ял сăнне улăштаракан курăмлă ĕçсен тĕп çăлкуçĕ – пуçаруллă бюджет программи. Ун тивлечĕпех ĕнтĕ Аçăмçырми территори пайĕнче те программăна хута янăранпа халăх хăй сĕнсе суйланă чи пĕлтерĕшлĕ проектсем чылай пурнăçланнă. Çынсен пуçарăвĕсене пурнăçа кĕртме аш-какай комбиначĕ те активлă хутшăнса пысăк пулăшу кӳрет. Кăçал, акă, Кăмпалта ача-пăча савăнмалăх вăйă площадки ӳссе ларнă. Авăрçырминче вара Заовражная урамри кивĕ кĕпер юсавра çĕнелнĕ. Пĕтĕмпех – кунта пурăнакансен пуçарăвĕпе, хăйсем укçа-тенкĕпе те, хастарлăхĕпе те хутшăннипе.

Вăрттăнлăх мар, ытти тăрăхри пекех çул-йĕр лару-тăрăвĕн кăткăслăхĕ пур. Ялти çынсем те лавккана, фельдшер пунктне, культура учрежденийĕсене чăрмавсăр çитесшĕн, ачасем шкула йĕркеллĕ çулпа утчăр, урамсене техника та çăмăллăн кĕрсе çӳретĕр теççĕ. Проблемăна юлашки çулсенче татма пулăшакан меслетсенчен пĕри каллех пуçаруллă бюджет программи. Пĕлтĕр пуçаруллă проектпа тата бюджет укçи-тенкине те ярса Малтикас Ялтăрари Восточная, Парковая, Школьная урамсенчи çул участокĕсене вĕт чулпа якатма май килнĕ. Маларахри çулсенче вара çăмăллăх программине хутшăнса Авăрçырминче, Йăлтăмра çул пайĕсене çак мелпе юсаса йĕркене кĕртнĕ.



Малтикас Ялтăрари çĕнĕ çул.

Хальхи вăхăтра, кирек хăш ялта та ĕнтĕ, тепĕр пăшăрхану вăл – пĕвесем юшкăнпа тулса ларса шурлăхланни. Çакă пушар хăрушсăрлăхне кирлĕ пек тивĕçтерме чăрмав кăларать, шыв-шурпа усă курма май çукки çынсемшĕн те кăткăслăх. Çавăнпах халăх шыв-шур вырăнĕсене тасатассипе çыхăннă проектсене ытларах сĕнни ăнсăртран мар. Аçăмçырми территори пайĕнче те йышлă вĕсем. Пуçаруллă бюджет программи пуçламăшĕнчен тĕрлĕ çулсенче Авăрçырминчи, Аçăмçырминчи, Кăмпалти икĕ, Тăвальушкăнь Ялтăрари пĕвесене чавтарса тасатассипе тимленĕ. Палăртмалла, юлашки объектĕнче ĕçсем туллин вĕçленмен-ха.

Ача-пăчапа çамрăксене вăйхала çирĕплетсе ӳсме пулăшакан объектсем те çĕкленеççĕ. Проектсене конкурс витĕр ăнăçлă кăларса Малтикас Ялтăрара, Юпшик Ялтăрара, Аçăмçырминчи Октябрьская урамра вăйă площадкисене вырнаçтарнă. Халĕ вĕсем кĕçĕннисене те, аслăраххисене те çанталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче хăйсен ытамĕнче йышлă пуçтараççĕ. Ачасен кăмăлĕ тулни тӳрех сисĕнет: вĕсем пушă вăхăта вăйăра ирттереççĕ кăна мар, спортпа туслашакансем те халĕ нумайрах.

Унсăр пуçне, пуçаруллă бюджет программипе ял сăваплă вырăнсене – масарсене – хăтлăлатма май килнине каламалла. Пĕлтĕр кăна-ха аçăмçырмисем масар çинче çĕнĕ çурт хăпартса лартнă, 2021-мĕшĕнче – тăвальушкăнь-ялтăрасем. Пурнăçран уйрăлакансене юлашки çула ăсатас йăла-йĕркене йĕпе-сапара, хĕллехи сивĕре те ирттерме меллĕ халĕ. Çăвасене, тĕрĕссипе, ку тăрăхра пурăнакансем, вилнĕ тăванĕ-ентешĕсене хисеплесе, яланах тирпейлĕхре тытма тăрăшаççĕ. Çулсеренех пĕрле кар тăрса масар çинче пухăнакан çӳп-çапа тасатасси, ӳссе кайнă йывăç-тĕме иртесси йăлара.

Ырă улшăнусене куратпăр пулин те, Аçăмçырми тăрăхне кĕрекен ялсенче те кăткăс проблемăсем сахал маррине каламасăр май çук. Вĕсем ял çыннисен пурнăçĕшĕн чăннипех те чăрмав кăлараççĕ, çавăнпа та вĕсене çывăх вăхăтрах округ енчен тимлĕхе илни кирлĕ.

**– Сăмахран, ялсенче шыв ыйтăвĕ çивĕч. Çулла шăрăх, çумăрсăр килнĕ чух çăлсем типеççĕ, çынсем кил-хуçалăхра усă курма шыв çуккипе хăшкăлаççĕ. Ялсене шывпа тивĕçтерекен скважинăсем е башньăсем пулсан ыйту татăлĕччĕ те.**

**Ялсене электроэнерги парса тăракан трансформатор станцийĕсен реконструкцийĕ те кирлĕ. Хальхисен хăватлăхĕ вуçех те çителĕксĕр. Ял çыннисем вара напряжени выляни пирки тăтăшах пăшăрханса пĕлтереççĕ. Кун пирки ресурспа тивĕçтерекен организацие пĕрре мар асăрхаттарнă ĕнтĕ, анчах лару-тăрăва лайăхлатма нимĕнле хурав та çук хальлĕхе.**

**Çул-йĕр ыйтăвĕ те хăйĕн çинчен аса илтерсех тăрать. Пытармастпăр, юсамаллиçĕнетмеллисем чылай. Ытларахăшĕ – район пĕлтерĕшлисем. Акă, шкул автобусĕ çӳрекен çула вăхăта тăсса ямасăр тивĕçлĕ шая çитермелле. Ачасен хăрушсăрлăхĕ – тĕп вырăнта.**

**Ыйтусем татах та сахал мар, паллах. Вĕсене округ шайĕнче çывăх вăхăтрах тимлĕхе илсен тем пекехчĕ,** – вырăнти ял çыннисен пăшăрханăвĕсене те палăртрĕ Александр Карезин ертӳçĕ.





Малтикас-ялтăрасем тата чăрăшкас-хирлепсем субботниксенче.

Ирина ЯКОВЛЕВА